# Партисен кандидачĕсем паллă

**Республикăри парламент партийĕсем Чăваш Ен Пуçлăхĕн кăçалхи авăн уйăхĕн 12-14-мĕшĕсенче иртекен суйлавне хутшăнма кандидатсем тăратассине вĕçленĕ.**

«Пĕрлĕхлĕ Раççей», РФКП тата «Тĕрĕс Раççей» кĕрешĕве хăй тĕллĕн тăратнă кандидат статусĕпе тухнă Олег Николаев кандидатури майлă пулни çинчен пĕлтернĕ.

РЛДПн 64-мĕш конференцийĕнче съездăн 27 делегачĕ Патшалăх Канашĕн депутачĕ Константин Степанов регион ертӳçин должноçĕшĕн кĕрешессине ырланă. Парти пĕлтернинче палăртнă тăрăх, РЛДП суйлава Владимир Жириновский принципĕсем – тĕрĕслĕх, хăюлăх, çынсене пулăшассине тĕпе хурасси – çинче никĕсленĕ программăпа хутшăнать.

Пенсионерсен партийĕ суйлава хутшăнма регион уйрăмĕн ертӳçине Владимир Ильина сĕннĕ. Вăл социаллă политика, çулланнă çынсен интересĕсене хӳтĕлесси, сывлăх сыхлавĕн инфратытăмне аталантарасси, çынсем пурăнмалли çурт-йĕр туянма пултарассине тивĕçтерессы çине пусăм тăвать.

«Çĕнĕ çынсем» парти пĕр саслă пулса Сĕнтĕрвăрринчи çу завочĕн генеральнăй директорĕн Максим Морозовăн кандидатурине ырланă. Вăл экономика аталанăвне, пĕчĕк тата вăтам бизнеса пулăшассине мала хурать.

«Симĕссисем» парти кандидачĕ – регион уйрăмĕн председателĕ Владимир Савинов. Вăл экологи тата регионăн çирĕп аталанăвĕн ыйтăвĕсене пысăк тимлĕх уйăрас тĕллевлĕ.

Тепĕр хут суйланма тĕллев лартнă Олег Николаев, регионăн тĕп отраслĕсен – промышленноç, ял хуçалăхĕн, строительство, вĕрентӳ, социаллă сфера – представителĕсенчен тăракан пуçару ушкăнĕн шанăçĕ çине таянать. Кану кунĕсенче ĕçлĕ тĕлпулу иртнĕ, унта суйлав кампанийĕн стратеги тĕллевĕсене сӳтсе явнă. «Эпир çĕнĕ тапхăр пуçламастпăр, палăртнă программăна пурнăçлассине малалла тăсатпăр. Сахал мар ĕç тунă. Умра татса памалли ыйту тата нумайрах. Командăпа тата республикăра пурăнакансемпе пĕрле малалла утма хатĕр», – тенĕ Олег Алексеевич.

**Николай АНТОНОВ**

Чи чĕрĕ те историпе тарăн çыхăнури калаçусем вара иртнĕ шăматкун «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕн общество тĕревĕн штабĕнче иртрĕç. Кунта Чăваш Ен Пуçлăхĕн кандидатурине çитес суйлава хутшăнма ырласа йышăннă пĕр шухăшлă лидерсем – пурнăçăн тĕрлĕ сферинче – промышленноçра, ял хуçалăхĕнче, строительствăра, вĕрентӳре, социаллă сферăра, массăллă информаци хатĕрĕсенче – хăйсен ĕçне чунтан парăнса тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлакансем пуçтарăнчĕç.

«Чăваш Енĕн пилĕк çуллăхри ӳсĕмĕ – влаçăн, бизнесăн тата обществăн тачă çыхăнăвĕн кăтартăвĕ, халĕ вара шăпах ăна çирĕплетме вăхăт çитнĕ, тесе шухăшлаççĕ вĕсем. Регион тилхепине Олег Николаев тытса пыма пуçланăранпа сисĕнекен ырă улшăнусем, унпа пĕрле вĕреннĕ, ĕçленĕ вăхăтри аса илӳсем кашнин сăнĕнче ăшă кулă ӳкерсе çуратрĕç. Тĕлпулăва хутшăннă Олег Алексеевич шанса тата ырласа сăмах илекенсене пурне те тав турĕ. «Пилĕк çуллăхри пĕрлехи ĕç пĕтĕмлетĕвĕсене пысăк хак панăшăн тав тăватăп. Ку тĕрев – пысăк хаклав кăна мар, малашне тата та пысăкрах яваплăх илме хама хам чĕнсе калани тата çакна пурнăçлама пысăк хавхалану та. Хальччен пурнăçлама май килни пĕтĕмпех Чăваш Ен командин, йывăрлăхсенчен хăраман тата тĕллевсене пурнăçлама пултаракан эпĕ шаннă тата ĕненекен командăн – ăнăçлă ĕçĕн кăтартăвĕ», – терĕ Олег Алексеевич. Политикăна тĕрлĕрен йышăннине пăхмасăрах тăван республикăна аталантарассипе çыхăннă тĕллевсем пĕрешкеллине палăртса вăл уйрăмах «Пĕрлĕхлĕ Раççей» тата «Тĕрĕс Раççей» политика партийĕсене тав турĕ.

Умра суйлав кампанийĕн пуçламăшĕ мар, пĕрлехи çул тăсăмĕ пулнине ăнланма ĕçтешсемшĕн çак сăмахсем, ахăртнех, çителĕклĕ пулчĕç.

Леонид Черкесов, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕн регионри уйрăмĕн секретарĕ:

«Анлă правительство» форматĕнче эпир тухăçлă ĕçлерĕмĕр. Тепĕр утăм – команда йышне «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин пĕрремĕш уйрăмĕсен секретарĕсене тата муниципалитетсен депутачĕсене кĕртсе ăна вăйлатасси. Ялсемпе хуласенче çынсемпе хутшăнса ĕçленĕ май, халăх шанăçне ĕçпе кĕме май пуррине ĕнентерсе, стратегисенчен шăпах вĕсем ăнăçлă çул хываççĕ. Умра тата нумай ĕç. Олег Николаевăн кандидатурине эпир «Пĕрлĕхлĕ Раççей» президиумĕн политканашĕнче ырласа сĕнтĕмĕр. Вăйсене пĕрлештерсе эпир вăхăт ыйтнине тивĕçтерме тата Чăваш Ен çыннисен ытлăхĕшĕн татах та ытларах ĕçлеме пултарăпăр».

**Виктория ВЫШИНСКАЯ**